# Пирĕн малашлăх. Наци проекчĕсем

(Малалли. Пуçл. иртнĕ кăларăмсенче)

## «Культура»

*«Культура» наци проекчĕн бюджечĕ пĕтĕмĕшле 113,5 млрд тенкĕпе танлашать. Çак наци проекчĕн шайĕнче федерацин 3 проекчĕ пурнăçланать.*

*Наци проекчĕпе палăртнă мероприятисене пурнăçлани культурăна мĕнпур çыншăн меллĕ тумалла. Культура учрежденийĕсене çынсем çӳрессин кăтартăвĕ 15 процент таран, культура цифра ресурсĕсемпе усă куракансен шучĕ 5 хут ӳсмелле. Регионсенчи пултарулăх пуçарăвĕсене пулăшмалла тата кадрсен резервне туса хумалла. Ялсенчи культура, пушă вăхăта усăллă ирттермелли культура учрежденийĕсен, библиотекăсен ĕçне çĕнелле йĕркелемелле.*

## Культура учрежденийĕсене ытларах çӳреччĕр




**«Культура» наци проекчĕ шайĕнче Чăваш Республикинче регионти 3 проект пурнăçланать: «Культурная среда», «Творческие люди» тата «Цифровая культура». Вĕсене пурнăçа кĕртсе пынă май, 2024 çул вĕçлениччен республикăра ырă улшăну чылай пулмалла. Мĕнле ĕçсем палăртнă-ха çак проектсен шайĕнче?**

Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерствин сайтĕнчи информаци çакна уçăмлă кăтартса парать.

2025 çулччен республикăра Культура аталанăвĕн центрне туса хума планланă. Ялсенчи пурĕ 50 клуба тĕпрен юсассине, реконструкци тăвассине е çĕнĕрен тăвассине пăхса хунă.

Республикăри кинозалсене модернизацилессине плана кĕртнĕ, виртуаллă концерт залĕсене йĕркелеме пăхса хунă.

Çак çулсенче ача-пăча искусство шкулĕсене тата культура профилĕпе пĕлӳ паракан училищĕсене çĕнĕ музыка инструменчĕсемпе, оборудованипе тата вĕренӳ материалĕпе тивĕçтермелле.

Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрне тĕпрен юсассине те «Культура» наци проекчĕ шайĕнче пурнăçланă. Çапла театр хайĕн 87-мĕш сезонне 2019 çулти октябрĕн 31-мĕшĕнче çĕнетнĕ çуртра уçрĕ. Театр ертӳçи Елена Николаева пĕлтернĕ тăрăх, 2020 çулти январь – февраль уйăхĕсенче кăна театра 14450 çын пынă. Ку унччен çулти çак тапхăртинчен чылай нумайрах. Театр çуртне реконструкци туса хута янă хыççăнхи пилĕк уйăхра унта 45 пин çын пынă.

Нацпроектпа палăртса хунă пысăк калăпăшлă ĕçсенчен пĕри – Чăваш патшалăх филармонине юсаса унти майсене лайăххрах тăвасси.

Республикăра модель стандартне тивĕçтерекен библиотекăсем туса хурĕç, нумай функциллĕ центрсем те (автоклубсем) туянма палăртнă.

Регион проекчĕсен шайĕнче ача-пăча пултарулăхĕн фестивалĕсене ирттерессине, культура еткерлĕхне упрас ĕçе волонтерсене явăçтарассине пăхса хунă. Кунсăр пуçне пултарулăх коллективĕсене, культура сферинче ĕçлекен коммерциллĕ мар пĕрлешӳсене грантпа тивĕçтерме конкурссем йĕркелеççĕ.

Республикăра федераци тата регионсен музейĕсен куравĕсене те йĕркелеме палăртнă.

Культура ĕçченĕсен професси ăсталăхне ӳстересси çине пысăк тимлĕх уйăрасси куçкĕрет: çĕр-çĕр специалиста вĕренӳ курсĕсене явăçтарма палăртнă.

## Мăнсĕнтĕрсен юратнă вырăнĕ пулĕ

***«Культура» нацпроект Муркаш районĕнче пурăнакансене те тӳррĕнех пырса тивет. Кун пирки район администрацийĕн культура, архив ĕçĕн тата туризм пайĕн пуçлăхĕ Любовь Рыжкова тĕплĕнрех каласа пачĕ:***

– Иртнĕ çул «Культура» наци проекчĕ пурнăçланма тытăнчĕ. Вăл пире те çĕнĕлле аталанма май пуррине кăтартса пачĕ. Культура сфери валли федераци бюджетĕнчен те сахал мар укçа-тенкĕ уйăрма тытăнчĕç. Эпир кун пирки тахçанах ĕмĕтленнĕ.

«Культурная среда» регион проекчĕ шайĕнче кăçал Мăн Сĕнтĕрте модель библиотекине йĕркелетпĕр. Ку ĕç пĕлтĕр пуçланнă. Малтанах Муркаш район бюджетĕнчен уйăрнă укçапа унта юсав ĕçĕсене 500 пин ытла тенкĕлĕх туса ирттернĕ. Хыççăн федераци шайĕнчи конкурса хутшăнтăмăр, çĕнтерӳçĕсен йышне кĕтĕмĕр. Çапла модель библиотекине туса хута яма федераци бюджетĕнчен 5 миллион тенкĕ уйăрса пачĕç. Ĕçсене кăçал çулла вĕçлеме палăртнă, – пĕлтерчĕ пай пуçлăхĕ.

Мĕн улшăнĕ-ха библиотекăра? Чи малтанах пурлăхпа техника базине çĕнетĕç, кĕнеке фончĕ те çĕнелĕ, библиотекăра литература каçĕсем, театрализациленĕ уявсемпе çемье уявĕсем, квестсем (тĕрлĕ ĕç пурнăçламаллипе çыхăннă вăйăсем) ирттерме пысăкрах лаптăксем йĕркелеççĕ.

– Библиотека хăтлă, çынсемшĕн меллĕ, пурнăçпа тан пыракан культура учрежденийĕ пулса тăни пысăк пĕлтерĕшлĕ тесе шутлатăп. Библиотека культурăпа информаци, ăс-тăн центрĕ пулса тăрасса, унта çынсем ытларах çӳреме тытăнасса шанатăп. Ку вара библиотека ĕçченĕсемшĕн те çĕнĕ шухăшсене пурнăçлама хистекен, вăй паракан пысăк хавхалану пулĕ, – палăртрĕ хайĕн шухăшне Любовь Рыжкова.

Паян Муркаш районĕнчи «Библиотекăсен централизациленĕ тытăмĕ» учрежденийĕн йышĕнче 30 библиотека ĕçлет. Учреждени ертӳçи Ирина Николаева каланă тăрăх, Мăн Сĕнтĕрти Культура çуртĕнче вырнаçнă библиотека унччен 121,7 тăваткал метр пулнă пулсан, юсав ĕçĕсем хыççăн унăн лаптăкĕ 187,5 тăваткал метрпа танлашĕ. Çакă коридорта курав лаптăкне йĕркеленипе пулмалла.

Ирина Николаева библиотека валли федераци укçи-тенкипе «Эксмо», «Росмэн», «Детская литература» тата ытти издательствăн кĕнекисене туяннине пĕлтерчĕ, информаци центрĕпе курав лаптăкĕнче юсав ĕçĕсем туса ирттермеллине каларĕ. Мăн Сĕнтĕр библиотекинче паян виçĕ çамрăк пуçарулă специалист ĕçлет. Йĕри-тавра пĕтĕмпех çĕнетнине кура, вĕсен професси ăсталăхне ӳстерессi, библиотека тивĕçтерекен услугăсен шутне ӳстересси çине те тимлĕх уйăрĕç.

Мăн Сĕнтĕр библиотекин ертӳçи Татьяна Ефимова библиотека çак таранччен 13 ялти вулакансене тивĕçтерсе тăнине пĕлтерчĕ. Çулталăкра кунта 1800 ытла вулакан килсе тăнă. Çынсен тĕрлĕ категорийĕ библиотекăри тĕрлĕ клуб ĕçне хутшăннă: компьютер ăсталăхне алла илме – «Манăн компьютер» кружока, литературăпа пултарулăх клубне, шашка тата шахмат вăййисене килĕштерекенсен клубне, «Ветеран» клуба тата ыттине те. Библиотекăра нумай функциллĕ центрăн «чӳречи» ĕçленĕ.

Çĕнĕ библиотекăра тата мĕн пулĕ-ха? Татьяна Ефимова юсав ĕçĕсене хальлĕхе хуплакан «чаршава» ытларах уçрĕ. Кунта ăс-тăн центрĕ, информаци центрĕ ĕçлеме тытăнмалла. Тĕрлĕ категорири çынсем валли хăтлă вулав пӳлĕмĕ туса хураççĕ, вăлах кинозал та пулса тăрайрать. Маларах палăртнăччĕ, курав лаптăкĕ пулать.

Библиотекăра «Çамрăк эколог» эко-клуб йĕркелĕç. Кунсăр пуçне «Библиопродленка», «Летний библиолагерь», «Нескучный выходной» енсемпе ĕçлеме палăртаççĕ. Библиотекăри кашни пӳлĕм нумай функциллĕ пулса тăмалла, ятарлă сĕтел-пукан вара (трансформаци тума пулăшаканни) вĕсен пĕлтерĕшне кĕске вăхăтрах улăштарма май парĕ. Çапла пĕр пӳлĕмех хăш-пĕр вулакан валли калаçу вырăнĕ пулма пултарать пулсан, теприсем валли âна çăмăллăнах театр лаптăкĕ е лектори лаптăкĕ тума пултарĕç.

Кун пек улшăнусене библиотекăна час-часах çӳрекенсем чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Вĕсенчен пĕри – Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче вĕренекен Светлана Гаврилова.

– Пирĕн хальхи йышши техникăпа усă курма, хăтлă пӳлĕмсенче пĕр-пĕринпе хутшăнма, çĕнĕ кĕнекесене çӳлĕк çинчен илсе кăна мар, электрон форматпа вулама та май пулĕ. Пире библиотекăн дизайн-проектне кăтартнăччĕ. Питĕ илемлĕ те хăтлă пулмалла! Эпĕ кунта малашне те хаваспах килсе çӳрĕп. Çамрăк экологсен клубне те çӳреме вăхăт тупатăпах, – хайĕн савăнăçне пытармарĕ çамрăк вулакан.







***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***